«Халăх тăрăшнипе – патшалăх пулăшнипе»

# «Ял çынни тирпейлĕ те хăтлă пурăнассишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр»

**Пуçарулăх бюджечĕн программине пурнăçласа Муркаш округĕнче нумай ĕç туса ирттереççĕ. Ку тĕлĕшри ĕç-хĕлпе Турай территори пайĕн пуçлăхĕ Евгений Орлов паллаштарать:**

– Муркаш муниципалитет округĕ малашлăха пăхса пурăнни выранти территори пайĕсен пуçлăхĕсемпе ялта пурăнакансем малашлăха пăхса çирĕп шанчăклă пулнинчен те курăнать. Хăйсен тĕллевĕсене вĕсем кулленхи ĕçпе çирĕплетме тăрăшаççĕ.

Турай территори пайĕнче те паян çак ĕç хăй еккипе пымасть. Кунта çынсене пурăнма, ĕçлеме тата канма, хăйсен пушă вăхăтне усăллă ирттерме лайăхрах условисем туса параси, ялти обществăлла йĕркелĕхпе пурнăç хăрушсăрлăхне туллин тивĕçтересси тĕп задача пулса тăрать. Ăна пурнăçлассине территори пайĕнче пурăнакансем пĕрлехи ĕç тесе йышăнаççĕ. Хăйсен тĕп ĕçĕсене йĕркелесе пынă чух явапллă ĕçченсем паян шăпах çак задачăсене тĕпе хурса пурнăçа кĕртме тăрăшнинчен тĕлĕнмелли çук.

Пирĕн ялсенче пурăнакансем пĕр чăмăра пĕрлешсе малашлăха пăхса тĕллевлĕ вăй хунăран пирĕн территори пайĕнче хальхи вăхăтра усă курмасăр пушă выртакан е хуçасăр çĕр участокĕсем çукпа пĕрех. Çакă пире ырахи куна çирĕп пăхса пурăнма хавхалантарать. Пирĕн округри 11 ялта пурăнакансем те çакна лайăх курса тăраççĕ, пĕрлехи ĕçе аван ăнланаççĕ. Çавăнпа пирĕн тăрăхра çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртессине пĕлтерĕшлĕ ыйтусен шутĕнчен малараха кăлартăмăр.

Малашлăха пăхса ĕçленĕ май аталану çулĕсем те уçăлсах пыраççĕ. Кунта халăх тăрăшни тата патшалăх пулăшни тĕп выранта тăраççĕ. Çичĕ хут тар тăкса ĕçлесен патшалăх пулăшăвĕ те витĕмлĕ пулнине ял çынни ăнланса илчĕ. Унпа вăл паян туллин усă курма тăрăшать. Çак ĕç ялсен малашлăхĕпе çыхăннине çынсем лайăх ăнланнине палăртса хăваратăп. Çавăнпа та халăхран тĕкĕ пуласса шаннипе тĕрлĕрен пуçарусене çул пама паян пирĕн пĕр иккĕленӳ те çук.

Çĕнĕлĕхсене çул пама паян пуçарулăх бюджечĕ пысăк тĕкĕ пулнине ялта пурăнакансем хăвăрт ăнланса илчĕç. Çавăнпа та ялта е ун таврашĕнче малашлăха пăхса тирпей-илем кĕртессипе, ытларах çĕнĕлĕхе пурнăç парассипе паян выранти халăх кар тăрса ĕçленине ырă енчен палăртатăп.

Мал туртăмлă ĕç пĕччен-иккĕн вăй хунипе пурнăçланса пыраймани пуриншĕн те паллă. Çавăнпа та выранти пĕлтерĕшлĕ ĕçсенче паян эпĕ хамăр тăрăхри Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртса хăваратăп. Асăннă хуçалăх тĕрек аталанни унта ĕçлекенсене тулăхрах пурăнма май парать. Çакă вара территори пайĕн пĕрлехи ĕçĕ çине те ырă витĕм кӳрет. Пĕрлехи ĕç çĕнĕ тĕллевсем çуратать.

Кăçал хамăр енре пуçарулăх бюджечĕн проектне хутшăнса активлă ĕçлеме тăрăшатпăр. Вĕсем кашниех пирĕн ене хăтлăрах тăвасси паян Турайпа Анаткасси тăрăхĕсенче пурăнакансене никама та иккĕлентермест. Хамăр енре эпир 2024 çулта маларах асăннă ĕçпе 6 проекта пурнăçлассипе тăрăшатпăр. Пуринпе те пите хĕретмелле мар пуласса шанатпăр.

Юлашки çулсенче çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе, урам хушшинчи çулсене юсассипе çине тăрса ĕçлеме тăрăшатпăр. Ку енĕпе вара пуçарулăх бюджечĕн программин майĕсем пĕчĕк мар. Çитменнине çапла майпа пурнăçа кĕртекен пуçарулăх проекчĕсем çине республика енчен уйăракан тимлĕх те пысăк, пулăшăвĕ те витĕмлĕ.

**Пĕрремĕш проект** – Çуткӳл çывăхĕнчи территорие тирпейлесе хăт кĕртесси тата кунта кану выранĕ йĕркелесси. Ку вăл туризм выранĕ пулнине ăнланнăран ĕçсен пахалăхĕ те малти выранта тăрать. Çуткӳл таврашĕнчи территорие тирпей-илем тата хăт кĕртессипе çыхăннă ĕçе вăхăтра пурнăçлама проектпа 1 миллион та 664 пин тенкĕ пăхса хăварнă. Укçа-тенкĕн çак суммине ял çыннисен тӳпи те пĕчĕк мар. Вăл пĕтĕмпе 166 пин ытла тенкĕпе танлашать.

Турай территори пайĕ шывпа пуян пулнипе паларса тăрать. Кунта Муркаш муниципалитет округĕнчи чи пысăк плотина тата карст мелĕпе йĕркеленнĕ Чăваш Енри чи тарăн кӳлĕ – Çуткӳл – пур. Танлаштарса пăхсан, вăл Азов тинĕсĕнчен те тарăнрах иккен. Çуткӳл тарăнăшĕ пирки тĕрлĕрен каланине илтме пулать. Тĕрлĕ литературăра унăн тарăнăшне 14,8 метр тесе палăртнă. Апла пулсан та ун патĕнче пурăнакансем ăна 16,5 метр тарăнăш тесе хисеплеççĕ. Уйрăм пулăçсем вара шыв тарăнăшне палăртмалли приборсем кунта 18,5 метр тесе кăтартнине пĕлтереççĕ.

Чылай çын пĕлекен тата нумай çĕрте паллă пулса тăракан кӳлĕн пĕр пуçне темиçе çул каяллах татса кайнă. Çулленех çуркунне шыв вăй илнĕ вăхăтра таталнă вырăн тарăнлансах пынă. Шыв хухнă май типнĕ çырансенче йывăç-тĕм ӳссе ларнă. Кăçал çав типнĕ вырăнсене йывăç-тĕмрен тасатса тата хăйăр сарса канмалли вырăн йĕркелеме шутланă. Пĕрлехи тăрăшулăхпа ĕмĕтсем пурнăçланса пыраççĕ. Çывăх вăхăтрах кӳлĕн ишĕлме пуçланă пуçне çирĕплетсе çитерĕпĕр тесе шутлатăп.

Ял халăхĕ асăннă кӳлĕ таврашне тахçанах тирпейлесшĕнччĕ, тасатасшăнччĕ. Павел Колесников предприниматель пулăшнипе хамăр ума асăннă кӳлĕн пуçне 20 метр сарлакăшне çитерме тĕллев лартрăмăр. Ăна пурнăçа кĕртсен кӳлĕри шыв татах та 1,8 – 2 метр хăпарĕ, тавралăх та илемленĕ. Кӳлĕ пуçĕнче малтанхи вăхăтра шыв юхмалли пăрăх пулманран çурхи шыв ăна çуллен юхăнтаратчĕ. Пăрăх хурса хăварни çак чăрмава çĕнме май парĕ, çĕр ишĕлме чарăнĕ тесе шутлатпăр. Кунпа пĕрлех кӳлĕ хĕрринче кану тата пляж выранĕ, ачасем валли вăйă лаптăкĕ йĕркелесси те кун йĕркинче тăрать. Çакă йăлтах тăван ен илемĕшĕн, ял хăтлăхĕшĕн.

Çуткӳл – илемлĕ вырăн. Кӳлĕ çине çулленех шурă акăшсем анса лараççĕ. Вырăнĕ чăнах та илĕртӳллĕ. Проектпа мĕн палăртнине туса çитерсен канакансем те йышлă пуласса, ялти пушă кил-çурта туянса пурăнма куçакансем те хушăнасса шанатпăр.

Асăннă ялпа çыхăннă **иккĕмĕш проектăн** пĕлтерĕшĕ те пĕчĕк мар тесе шутлатăп. Вăл асăннă ялта пурăнакансем валли Нагорная урамне вак чул сарса хытарасси пулса тăрать. Кунта ĕç калăпăшĕ пĕчĕк мар. Ăна вăхăтра пурнăçласа ял хăтне лайăхлатма 1 миллион та 847 пин тенкĕ кирлине ăнланса, ялта пурăнакансем те выранти ĕçе хăвăртлатма активлă хутшăнчĕç. Тăван енри тирпей-илем хăйсен аллинчине ăнланса вĕсем кĕске вăхăтра 184 пин тенкĕ ытла укçа-тенкĕ пуçтарса пани территори пайĕшĕн пысăк тĕкĕ пулчĕ. Ку объектра тирпей-илем кĕртес ĕçсем паян тулли хăватпа малалла пыраççĕ.

**Виççĕмĕш проект** та пирĕн территори пайĕшĕн иккĕмĕш выранта тăмасть. Ку проект Уйкас Турай ялĕпе çыхăннă. Ялта пурăнакансем малашлăха пăхса выранти ача-пăча лапамĕ тавра карта тытма шутларĕç. Умри ĕçсене кĕске вăхăтра пурнăçлама 298 пин тенкĕ кирлĕ пулассине палăртсан, ялта пурăнакансем пĕр çын пек пулса кĕске вăхăтра 30 пин тенкĕ майлă укçа пуçтарма пултарчĕç. Ял çыннисен тăрăшулăхĕ ĕç хăвăртлăхне курăмлă ӳстерме май пачĕ. Паян вăл ялăн хăйне май илемлĕ вырăнĕ пулса тăчĕ.

Пирĕн территори пайĕ валли пăхнă **тăваттăмĕш проект** та ялсен аталанăвĕпех çыхăннă. Вăл харăсах икĕ яла пырса тивнине уйрăммăн палăртса хăваратăп. Вĕсем – Çулав ялĕнчи Школьная тата Садовая урамсенчи тата Турай салинчи Садовая урамри ĕçмелли шыв пăрăхĕсен тытăмне юсаса çĕнетесси. Проектăн пĕтĕмĕшле хакĕ – 3 миллион та 133 пин тенкĕ. Асăннă объектсенчи ĕçсене вăхăтра пурнăçлама ял çыннисем пухнă укçа сумми 300 пин тенкĕпе танлашрĕ. Халăх тăрăшулăхĕ кунти ĕçсене те вăраха тăсассинчен пулăшнине паян уйрăммăн палăртатăп.

**Пиллĕкмĕш проект** Анаткасси ялĕнчи Овражная тата Березовая урамсенчи çула вак чул сарса хытарассипе çыхăннă. Ку ĕçĕн смета хакĕ – 2 миллион та 38 пин тенкĕлĕх. Ял çыннисем 103 пин тенкĕ укçа пухма пултарчĕç пулсан, ку тăрăхри Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ пĕрлехи ĕçе 100 пин тенкĕ ытла хывĕ. Çак пулăшу тăван ене хăт кĕртессипе пысăк тĕкĕ пулнине палăртса хăваратăп.

Пуçарулăх бюджечĕпе пăхнă **улттăмĕш проект** вăл кăçал Тушкасси ялĕнче пурнăçланмалла. Кунта Мартынов, Вологодский тата Садовая урамсенчи çула вак чул сарса хытарассипе ĕç пырать. Ĕçĕн пĕтĕмĕшле хакне 4 миллион та 460 пин тенкĕ тесе хакланă. Асăннă строительство ĕçне ялта пурăнакансем пĕрлехи вăйпа 96 пин тенкĕ хывнă пулсан, Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативне пĕрлехи ĕçе 350 пин тенкĕ хывса ялта пурăнакансемшĕн курăмлă çăмăллăх туса панишĕн тав тăватăп. Тавах вĕсене йывăрлăхсем умĕнче алă усманнишĕн.

Халĕ маларах асăннă кашни объектрах вăхăт кĕр еннелле сулăннă май строительство ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Мĕн тунипе ял çыннисем перекетлĕ усă курассине çеç шанмалли юлать.

Тирпейлĕ те хăтлă пурăнассишĕн тăрăшакан ял çыннине пулăшма çĕршывра тĕрлĕ программăпа расна пулăшу мелĕсем пăхса хăварнă. Пирĕн ялсенче пурăнакансем вĕсемпе туллин усă курма тăрăшнине ырламалла çеç. Кунта халăх пуçарулăхĕ выранти пурнăça хăтлăрах тăвас тĕллевпе çыхăннине палăртатăп. Ялсенчи çул тата шыв ыйтăвĕсем ял çыннин пурнăçĕнче питех те пĕлтерĕшлĕ енсем пулса тăраççĕ.

Турай территори пайĕ хамăр тăрăха килекенсене кашни кĕтесрех хăйĕн илемĕпе, тăван тавралăха юратакан ĕçчен çынсемпе савăнтарать. Çак юрату пирĕн енре ăруран ăрăва куçса пынине шута илсен, эпир паян пурнăçланă ĕçпе тавралăх илемĕ татах нумай çул çамрăк ăрăва савăнтарĕ. Маларах каланине ялсене хулара пурăнакансем таврăнма пуçлани те çирĕплетет.

Хамăр патăмăрта çынсен пурнăç условийĕсем мĕнле пулассы ытларах хамăртанах, выранта пурăнакансем пуçарулла пулнинчен килет. Çакна Турай территори пайĕнче пурăнакансенчен ытларахăшĕ тĕрĕс ăнланать пулĕ тесе вĕçлетĕп хамăн калаçăва.

**Проект Чăваш Ен Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**



Çулав ялĕнче те çĕнĕ шыв пăрăхĕ хучĕç.



Çуткӳлти Нагорная урамра çул тунă вăхăт.